**Муниципальное бюджетное общеобразовательное учреждение**
**«Верхнеачакская средняя общеобразовательная школа им. А.А. Айдак»**
**Ядринского района Чувашской Республики**

| | | |
|---|---|---|
| ***Рассмотрена*** | ***«Согласовано»*** | ***«Утверждаю»*** |
| ***на заседании ШМС*** | ***зам. директора по УВР*** | ***директор*** |
| ***Протокол №__*** | ***_________С.В. Степанова*** | ***МБОУ «Верхнеачакская СОШ им А.П.Айдак»*** |
| ***от «30 » августа 2022 г.*** | ***«30 » августа 2022г.*** | ***__________ Т.А. Яжейкина*** |
| ***Руководитель*** | | ***Приказ №236 «30 » августа 2022г.*** |
| ***__________*** | | |

МУНИЦИПАЛЬНОЕ БЮДЖЕТНОЕ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНОЕ УЧРЕЖДЕНИЕ "ВЕРХНЕАЧАКСКАЯ СРЕДНЯЯ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНАЯ ШКОЛА ИМЕНИ А.П.АЙДАК" ЯДРИНСКОГО РАЙОНА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Подписан: МУНИЦИПАЛЬНОЕ БЮДЖЕТНОЕ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНОЕ УЧРЕЖДЕНИЕ " ВЕРХНЕАЧАКСКАЯ СРЕДНЯЯ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНАЯ ШКОЛА ИМЕНИ А.П.АЙДАК" ЯДРИНСКОГО РАЙОНА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
DN: ИНН=002119003186, СНИЛС=01464605429, ОГРН=1022102628877, STREET="ул. Ленина, 38а", E=vasosh@gmail.com, C=RU, S=Чувашская Республика - Чувашия, L=д. Верхние Ачаки, O="МУНИЦИПАЛЬНОЕ БЮДЖЕТНОЕ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНОЕ УЧРЕЖДЕНИЕ ""ВЕРХНЕАЧАКСКАЯ СРЕДНЯЯ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНАЯ ШКОЛА ИМЕНИ А.П.АЙДАК"" ЯДРИНСКОГО РАЙОНА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ", G=Татьяна Анатольевна, SN=Яжейкина, T=директор, CN="МУНИЦИПАЛЬНОЕ БЮДЖЕТНОЕ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНОЕ УЧРЕЖДЕНИЕ ""ВЕРХНЕАЧАКСКАЯ СРЕДНЯЯ ОБЩЕОБРАЗОВАТЕЛЬНАЯ ШКОЛА ИМЕНИ А.П.АЙДАК"" ЯДРИНСКОГО РАЙОНА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ"
Основание: Я являюсь автором этого документа
Местоположение: место подписания
Дата: 2022-11-07 15:08:13
Foxit Reader Версия: 9.7.1

# Рабочая учебная программа по родному (чувашскому) языку для 9 класса на уровне основного общего образования

**Составитель Максимова Галина Владимировна,**
**учитель чувашского языка и литературы**
**высшей категории**

**Верхние Ачаки - 2022**

**Программăна çак документсене тĕпе хурса ĕçленĕ:**
- Федерального государственного образовательного стандарта основного общего образования (утвержден приказом Минобрнауки России от 17.12.2010 г. № 1897, (зарегистрирован в Минюсте России 01.02.2011 г., регистрационный номер 19644), с изменениями, внесенными приказами Министерства образования и науки № 1644 от 29.12.2014; № 1577 от 31 декабря 2015);
- основной образовательной программы основного общего образования МБОУ «Верхнеачакская СОШ им. А.П. Айдак» Ядринского района Чувашской Республики
- Чăваш чĕлхи. Тĕслĕх программа: чăваш шкулĕн 5-9 класĕсем валли. И.А.Андреев, Г.Н.Семенова, Ю.М.Виноградов хатĕрленĕ. – Шупашкар, 2013;
- Ю.М.Виноградов, А.С. Егорова, Л.Г. Петрова Чăваш чĕлхи: 9-мĕш класс валли / Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2020.

**Программăна пурнăçа кĕртмелли вăхăт: 2022-2023 вĕренӳ çулĕ**
Раççей Федерацийĕн патшалăх базис вĕренӳ планĕнче чăваш наци шкулĕн 9-мĕш класĕнче чăваш чĕлхине вĕрентме 70 сехет (эрнере – 2 сехет**)** уйăрнă. Шкулăн вĕренӳ планĕнче вĕренӳ çулĕ 34 эрнепе танлашнине шута илсе хамăн ĕç программине 68 сехетпе çыртăм.

**Чăваш чĕлхине вĕреннин результачĕссем**

Чăваш чĕлхи кашни чăваш çыннишĕн тăван чĕлхе, амăшĕн чĕлхи пулса тăрать. Тăван чĕлхе пулăшнипе кашниех мĕн ачаран хăй таврашĕнчи тĕнчене ăнкарса пырать, пурнăç пулăмĕсене ăнланма, ăс-хакăлне ӳстерме вĕренет, Тăван чĕлхене пĕлни ытти чĕлхесене вĕренме, çавна май ытларах пĕлӳ илме пулăшать. Ачасене чĕлхен аталанăвĕпе, словарь майĕпен улшăнса тата пуянласа пынипе тата ытти кăсăклă ыйтусемпе паллаштарни чĕлхене анлăрах тишкерсе хаклама вĕрентет, тавра курăма сарать. Тăван чĕлхене вĕренсе шкул ачи хăйĕн пĕлĕвне ӳстерсе пырать, чĕлхе саккунĕсемпе паллашни ăна тĕрĕс шухăшлама вĕрентетĕ.Унпа пĕрлех вĕренекенсен калаçăвĕ тата çыру хăнăхăвĕ аталанать, пĕтĕмĕшле культура шайĕпе тавра курăмĕ ӳсет, анлăланать.

Тăван чĕлхен воспитани тĕллевлĕхĕ пысăк: чĕлхемĕр çамрăк ăрăва тивĕçлĕ шайра пăхса ӳстерме пулăшать, ĕçе хăнăхтарать, тĕрлĕ информаци çăл куçĕпе усă курма вĕрентет.

Наци шкулĕсенче тăван чĕлхене вĕрентессин тĕп тĕллевĕсем çаксем:

- чăваш чĕлхи патшалăх чĕлхи пулнине тĕпе хурса ăна хисеплеме, юратма, культура пулăмĕ иккенне, илемлĕх пуянлăхĕ пулнине ăнланма вĕрентесси; тăван чĕлхемĕрĕн обществăри выранне (çынсем хутшăннă чухнехи кирлĕлĕхне), чĕлхере чăвашăн кăмăл-сипет, моральпе этика нормисем, шухăшлав манерĕ, тавра курăмĕ палăрнине кăтартасси;
- чăваш чĕлхине кулленхи пурнăçра, вĕренӳре усă курмалăх алла илме, тăван чĕлхепе усă курса кирек мĕнле самантра та хутшăнма хатĕр пулма, пуплеве куллен-кун якатма хавха пухма хатĕрлесси; кулленхи вĕренӳре кирлĕ хăнăхусене, пур енлĕ вĕренӳ, ĕç-хĕл мелĕсене (ĕç тĕллевĕсене сăмахпа каласси, планласси, пуплев енчен тĕрĕслесси, тӳрлетесси; библиографи шыравĕ тăвасси, чĕлхе словарĕсенче, Интернетра тата ытти информаци хатĕрĕсенче кирлĕ материал тупасси, ăна тишкересси, илнĕ информацие кирлĕ пек улăштарасси, çĕнетесси т.ыт.те) алла илме пулăшасси;
- чăвашла пуплевĕн тĕрлĕ тĕсĕпе усă курма, чĕлхе нормисене хутшăнăвăн тĕрлĕ лару-тăрăвĕнче тытса пыма, пуплев этикетне пăхăнма хăнăхтарасси; чĕлхе тытăмĕ çинчен, вăл

пуплевре мĕнле палăрни çинчен пĕлӳ парасси; чĕлхе факчĕсене уйăрса илме, тишкерме, танлаштарма, ушкăнлама тата хаклама пултараслăха аталантарасси; пуплевре ялан усă куракан е усă курма хатĕр сăмах йышне ӳстересси; пуплеве чĕлхен грамматика хатĕрĕсемпе пуянлатма хăнăхтарасси; орфографипе пунктуаци енчен тĕрĕс çырма вĕрентесси; сăмахсемпе стиль енчен вырăнлă усă курма вĕрентесси; пуплеве куллен-кун лайăхлатас, пуянлатас тĕллеве çирĕплетесси.

Вĕрентӳ тĕллевĕсем ачасем чăваш чĕлхи предмечĕпе мĕн-мĕн пĕлмеллипе (вĕренӳре йĕркеленмелли компетенцисемпе) тачă çыхăннăĕ Тăван чĕлхене 5–9-мĕш классенче вĕреннĕ май йĕркелемелли компетенцисем виççĕ: коммуникаци (е хутшăну) компетенцийĕ, чĕлхе тата лингвистика компетенцийĕ, культуроведени компетенцийĕ,

Коммуникаци е хутшăну компетенцийĕ пуплев ĕçĕ-хĕлĕн пур тĕсĕпе (тăнлав, калаçу, çыру, вулав) усă курма вĕрентмеллине пĕлтерет, çавăн пекех кунта калаçу тата çыру пуплевне тĕрĕс йĕркелесси те, чĕлхе хатĕрĕсемпе тĕрлĕ ситуацие кура тĕллевлĕ тата вырăнлă усă курасси те, харпăр пуплевне, хутшăнури ытти çынсен калаçăвне, вĕсен хутшăнури тĕллевне туйса-сăнаса тăрасси те, калаçăва кирлĕ енне çавăрма пултарасси те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Чĕлхе тата лингвистика компетенцийĕ пуррине çак паллăсем кăтартаççĕ: чĕлхе знак системи тата çынсене хутшăнма кирлĕ хатĕр пулнине пĕлни, чĕлхе тытăмне, вăл улшăнма пултарнине ăнланни; чĕлхе вĕрентĕвĕ мĕн иккенне, ун тĕп пайĕсене тата тĕп ăнлавĕсене пĕлни; чĕлхе факчĕсемпе пулăмĕсене тишкерсе хаклама пултарни; пуплевре усă куракан сăмахсемпе тата грамматика хатĕрĕсемпе ирĕклĕ усă курни; пуплев нормăллă пулнипе пулманнине пĕлни.

Чăваш чĕлхине вĕреннин результачĕсем виçĕ енлĕ пулмалла: харкамлăх результачĕсем (шкул ачи хăйĕншĕн тунисем), пур предмета та вĕренме кирлисем, тăван чĕлхепе хăйĕнпе кăна çыхăннă результатсем.

**Харкамлăх результачĕсем:**

1) тăван чĕлхе чăваш халăхĕн наци пурлăхĕ пулнине, Чăваш Республикинче вырăс чĕлхипе тан патшалăх чĕлхи пулнине ăнланни; тăван чĕлхепе ӳлĕмрен кулленхи пурнăçра, суйласа илнĕ профессире уса курма пултарни;

2) чăваш чĕлхин илемлĕхне хаклама пултарни, тăван чĕлхене хисеплени, унпа мăнаçланни; чăваш пуплевĕн нормисене наци культурин пуянлăхĕ шайне лартса сыхласси кашни чăвашшăн пысăк тивĕç тесе йышăнни; пуплеве куллен-кун аталантарма тăрăшни;

3) шухăшпа туйăма палăртма усă куракан сăмахсем, грамматика хатĕрĕсем пуплевре йышлă пулни; ача хăй пуплевне (калаçнине те, çырнине те) сăнаса тивĕçлĕ хак пама пултарни.

**Пур предмета та вĕренме кирлĕ результатсем:**

**1)**пуплевĕн мĕн пур тĕсĕпе усă курни:

- сăмахпа каласа е çырса пĕлтернĕ информацие тĕрĕс ăнланни
- вулавăн тĕрлĕ мелĕпе усă курни;
- тĕрлĕ çĕртен (хаçат-журналтан,
- Интернетран, радиопа телевиденирен тĕытĕте) килекен материал çине таянса информаци пухма пултарни;
- ку е вăл темăпа çыхăннă материала вуласа е илтсе тупма, ăна пухса, тишкерсе, кирлине суйласа илме пултарни;
- пухнă информацие сыхлама, улăштарма тата кирлĕ çĕре çитерме пултарни (информаци çăл куçĕ хаçат-журнал, тĕрлĕрен техника хатĕрĕ пулма пултарать);

- пĕччен е ушкăнпа тумалли вĕренӳ ĕçĕн тĕллевне, йĕркине ăнланса илни, ĕç результатне каласа е çырса хаклама пултарни;
- шухăша сăмах вĕççĕн е çырса ирĕклĕ те тĕрĕс уçса пама пултарни;
- тантăшсем умĕнче пĕчĕк е пысăкрах доклад тума хăнăху пурри;

2) вĕренӳре илнĕ тĕрлĕ пĕлӳпе, нумай-нумай хăнăхупа яланхи пурнăçра усă курни; тăван чĕлхене вĕренсе пухнă пĕлӳпе тата хăнăхупа ытти предметсене (тăван мар чĕлхесене, литературăна тĕытĕте) вĕренме усă курни;

3) калаçнă май, пĕр-пĕр ĕç тунă чух е мĕнле те пулин тавлашуллă ыйтăва сӳтсе явнă чух çынсемпе тĕрлĕ çыхăнăва кĕме хăнăху пурри; пĕр-пĕр йĕркепе иртекен хутшăнура е яланхи калаçура наци культуринче çирĕпленнĕ пуплев нормисене пăхăнни.

**Предмета вĕреннин результачĕсем**

**Ачасен пĕлмелле:**

1) чăваш чĕлхи чăваш халăх чĕлхи, хамăр республикăра патшалăх чĕлхи (вырăс чĕлхипе пĕрле) пулса тăнине ăнланма; тăван чĕлхепе культура хушшинче тачă çыхăну пуррине пĕлме; чăваш чĕлхи уйрăм çынпа общество пурнăçĕнче мĕнле вырăн йышăннине ăша хывма;

2) тăван чĕлхене пĕлни чăваш культуришĕн, халăх пуласлăхĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине, çавăнпа чĕлхене вĕренме тивĕç пуррине ăнланма;

3) пуплевĕн тĕрлĕ тĕсĕпе усă курма:

4) чăваш чĕлхине тĕпчекен ăслăлăхăн никĕсне ăша хывма; чĕлхен шайĕсемпе единицисем хушшинчи çыхăнусене ăнланма;

5) сăмаха фонетика, тытăмĕ, пулăвĕ, лексика енчен тишкерме, сăмах майлашăвĕпе предложение синтаксис енчен тишкерме; текста ун содержанийĕ, тĕп паллисемпе тытăмĕ енчен, пуплевĕн функцире палăракан тĕсĕсене кура, чĕлхе уйрăмлăхĕсене пăхса, илемлĕх хатĕрĕсене шута илме.

**Ачасен пĕлмелле:**

- сăмахпа каласа е çырса пĕлтернине (текст тĕллевне, темине, тĕп тата хушма информацине) кирлĕ пек ăнланма;
- стильпе жанр енчен мĕнле пулнине пăхмасăр текста вулавăн тĕрлĕ тĕсĕпе (çиелтен пăхса тухни, паллашмалла пăхса тухни, вĕренни) усă курма;
- вуланă текста информаци енчен улăштарса çĕнетме (план тума, тезиссем çырма) пултарни; кĕнекепе, хаçат-журналпа ĕçлеме;
- словарьсен тĕрлĕ тĕсĕпе, пĕлкĕчсемпе (вăл шутра электрон носителе кĕртнисемпе) усă курма;
- стильпе жанр енчен расна текстсене çын вулани тăрăх ăнланма; аудированин тĕрлĕ тĕсне (тулли ăнланни, тĕп содержанине ăнланма, кирлĕ информацие суйласа илни) алла илме;
- пуплев сыпăкĕсене содержани, функци, усă курнă чĕлхе хатĕрĕсем тăрăх танлаштарма;
- итленĕ е вуланă текста пĕр-пĕр виçепе кĕскетсе (улăштармасăр, план туса, тезис хатĕрлесе) каласа е çырса пама;
- шухăша сăмахпа каласа тата çырса ирĕклĕн те тĕрĕс уçса пама; текст тытăмне тĕрĕс тытса пыма; çыраканнин пурнăçри пулăмсем çинчен, вулани-илтни çинчен хăй шухăшне калама;
- стильпе тĕсне кура хутшăну тĕллевне, лару-тăрăвне шута илсе сăмахпа каласа е çырса ку е вăл йышши текст хайлама; хутшăну задачисене кура ку е вăл чĕлхе хатĕрĕ суйласа илсе пĕр-пĕр жанр законĕсем тăрăх текст (калав, хаклав, çыру, расписка, шантару, заявлени) тума;
- монологпа диалог тĕсĕсене пĕлме; ачан хăйĕн тантăшĕсем умĕнче кĕске хыпар вуласа пама, доклад тума;

- пуплеври литература чĕлхин орфоэпи, лексика, грамматика нормисене тытса пыма; сăмахсемпе пĕлсе усă курма; çырура орфографипе пунктуаци правилисене пăхăнма;
- çынсемпе калаçнă чух пуплев этикетне шута илме; чĕлхе хатĕрĕсем вырăнне пуплев хатĕрĕсемпе (мимикăпа, алă хусканăвĕпе) вырăнлă усă курма;
- кашни хăйĕн пуплевне сăнаса тĕрĕслесе тăма, содержани, чĕлхе енчен, хутшăну тĕллевне пурнăçлас тухăçлăхĕ енчен хаклама пултарни; грамматикăпа пуплев йăнăшĕсене тупма, тӳрлетме пултарни; харпăр хăй тунă текста лайăхлатма тата редакцилеме.

## Вĕренӳ предмечĕн содержанийĕ

### Синтаксиспа пунктуаци

Синтаксис – чĕлхе наукин сăмахсенчен пуплев мĕнлерех йĕркеленни çинчен вĕрентекен пайĕ. Пунктуаци – пуплеври пĕлтерĕшлĕ сыпăксене еплерех уйăрмалли çинчен калакан правилăсен пуххи. Пунктуаци калас шухăшпа, грамматикăпа тата чĕлхе уйрăмлăхĕсемпе çыхăнни.

Хутлă предложнени. Хутлă предложени çинчен пĕтĕмĕшле ăнлантарасси (хутлă предложение хутсăррисенчен уйăрмалли тĕп паллă). Хутлă предложенири хутсăр предложенисене çыхăнтаракан мелсем: союзсем, союзла сăмахсем, хыç сăмахсем, аффикссем, пайсен вырăнĕ-йĕрки, интонаци пĕрлĕхĕ.

Хутлă предложенисен тĕсĕсем: 1) çыхăну паллиллĕ хутлă предложенисем (сыпăнуллă хутлисем, пăхăнуллă хутлисем), 2) çыхăну паллисĕр хутлисем.

Сыпăнуллă хутлă предложенири хутсăр предложенисене çыхăнтаракан союзсем. Чарăну паллисем лартасси.

Чĕлхе тата пуплев. Мĕн вăл пуплев? Пуплев стилĕсем. Ĕç хучĕсем.

Пăхăнуллă хутлă предложени пайĕсем: тĕп предложени, пăхăнуллă предложени. Вĕсене çыхăнтаракан мелсем: союзсем, союзла сăмахсем, хыç сăмахсем, аффикссем, пайсен вырăнĕ-йĕрки.

Пăхăнуллă предложенисен пĕлтерĕшлĕ ушкăнĕсем: ĕçе тăваканнине (субркта), ĕç обректне, ĕçне хăйне, вырăна, вăхăта т.ыт.те. Кашни пĕлтерĕш çыхăну мелĕсене хăйне кура ыйтни. Хăш-хăш пăхăнуллă хутлă предложенисем тытăмĕпе хутсăр предложени енне туртăнни.

Пăхăнуллă предложенин хутлă предложенири вырăнĕ.

Пăхăнуллă предложени тĕп предложение пĕтĕмĕшлĕн е унăн пĕр-пĕр пайне кăна ăнлантарни. çак уйрăмлăх хутлă пĕрлĕхĕн интонацийĕнче те палăрни.

Пăхăнуллă предложени тулли мар пĕлтерĕшлĕ сăмаха ăнлантарса содержани енчен унпа пĕрлешсе кайни *(Вăрçă чарăннă çул асатте киле таврăннă).*

Пăхăнуллă хутлă предложенисенче чарăну палли лартасси, çыхăну паллисĕр хутлă предложенисем. çыхăну паллисĕр хутлă предложенири хутсăр предложенисен çыхăнăвĕ, пĕлтерĕшĕ, çыхăну паллисĕр хутлă предложенисенче чарăну палли лартасси.

Хутлă предложенисенчи хутсăр предложенисем тĕрлĕ мелпе çыхăнни (кăткăс тытăмлă хутлă предложенисем). Пăхăнуллă хутлă предложенисене май пур çĕрте сыпăнуллисемпе е союзсăррисемпе ылмаштарасси. Ылмаштарнă хыççăн текст сăн-сăпачĕпе стилĕ, шухăш сĕмĕсем улшăннипе улшăнманнине сăнасси. Пăхăнуллă хутлă предложенисене хутсăррисенчен уйăрасси. Пăхăнуллă предложенисен пĕлтерĕшĕсене палăртасси, çав пĕлтерĕшсем çыхăну мелĕсем урлă палăрнине сăнасси. Пăхăнуллă предложение хутлă предложенире хутлă пĕрлĕхĕн шухăшне кура вырнаçтарма пĕлесси.

Çыхăну паллисĕр хутлă предложенисенчи хутсăр предложенисен шухăш çыхăнăвне тĕрлĕ интонаципе палăртасси, шутлав интонацийĕпе (интонация перечисления), хирĕçлев интонацийĕпе (интонация противопоставления), ăнлантару интонацийĕпе (интонация пояснения).

Калаçупа çырура çыхăну паллисĕр хутлă предложенисене тĕрĕс йĕркелесси. Пĕр тĕрлĕ хутлă предложение тепĕр тĕрлипе ылмаштарасси, ылмаштарни предложени содержанине улăштарнипе улăштарманнине сăнасси. Хутсăр тата хутлă предложенисенче чарăну палли лартас хăнăхăва аталантарасси. Предложенин чарăну палли лартассипе çыхăннă уйрăмлăхĕсеене ăнлантарасси.

Чăваш çырулăхĕн аталанăвĕпе хальхи сăн сĕпачĕ. Чăваш çырулăхĕ, унăн тапхăрĕсем. Чăваш çырулăхĕн çĕнĕ тапхăрĕ. Хальхи чăваш çырулăхĕ. И.Я. Яковлев.

Синтаксиса вĕреннине аса илсе пĕтĕмлетесси.

Чĕлхе – пуплев. Текст, унăн тĕсĕсем. Текстри предложенисене пĕр-пĕринпе çыхăнтармалли мелсем. И.Я. Яковлев чăваш халăхне панă халал.

| № | Урок теми | Сехетсен шучĕ |
|---|---|---|
| | Мĕн вăл хутлă предложени | |
| 1 | Чăваша чăваш чĕлхи кирлĕ. | 1 |
| 2 | Вĕреннине аса илни | 1 |
| 3 | Вĕреннине аса илни | 1 |
| 4 | Аса илӳ диктанчĕ | 1 |
| 5 | Проект ĕçĕ. «Чăваш чĕлхинчи салам сăмахĕсем» темăпа проект ĕçĕ çырасси. | 1 |
| 6 | Хутлă предложенисен тĕсĕсем. | 1 |
| 7 | Сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем | 1 |
| 8 | Изложени | 1 |
| 9 | Изложени | 1 |
| 10 | Сыпăнтаракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисече чарăну паллисем лартасси | 1 |
| 11 | Хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем | 1 |
| 12 | Сочинени | 1 |
| 13 | Хирĕçлекен союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисече чарăну паллисем лартасси | 1 |
| 14 | Уйăракан союзлă сыпăнуллă хутлă предложенисем | 1 |
| 15 | Изложени | 1 |
| 16 | Изложени | |
| 17 | Сыпăнуллă хутлă предложени тишкересси | 1 |
| 18 | «Сыпăнуллă хутлă предложени» темăна вĕреннине аса илсе çирĕплетесси | 1 |
| 19 | «Мĕн вăл чăваш юрри?» темăпа калăпăшĕпе пысăках мар ăслав хайлавĕ çырасси | 1 |
| 20 | Тĕрĕслев диктанчĕ | 1 |
| 21 | Пăхăнуллă хутлă предложени пайĕсем. | 1 |
| 22 | Пăхăнуллă предложение тĕп предложенипе çыхăнтаракан мелсем. | 1 |
| 23 | «Никнеймсем мĕн çинчен калаççĕ?» темăпа проект ĕçĕ çырасси | 1 |
| 24 | Пăхăнуллă предложенин хутлă пĕрлĕхри вырăнĕ. | 1 |
| 25 | «Мĕн вăл тĕрек?» темăпа калăпăшĕпе пысăках мар ăслав хайлавĕ çырмалла | 1 |
| 26 | ПХП-че чарăну палли лартасси. | 1 |
| 27 | Изложени | 1 |
| 28 | Пăхăнуллă хутлă предложени ушкăнĕсем | 1 |
| 29 | Пăхăнуллă хутлă предложени ушкăнĕсем | 1 |
| 30 | Республикăн пĕрлехи экзаменнне хатĕрленетпĕр. | 1 |
| 31 | Союзлă пăхăнуллă хутлă предложенисем | 1 |
| 32 | «Чăваш апат-çимĕçĕ» темăпа проект ĕçĕ çырасси | 1 |
| 33 | Союзла сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем | 1 |
| 34 | «Кам тăван тавралăха юратать, вăл унăн илемне упрама тăрăшать» темăпа ăслав çырасси. | 1 |
| 35 | Хыç сăмахлă пăхăнуллă хутлă предложенисем | 1 |
| 36 | Пайĕсене аффикссемпе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем | 1 |
| 37 | Тĕрĕслев ĕçĕ | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| | | |
| 38 | Пайĕсене вырăнĕ-йĕркипе çыхăнтаракан пăхăнуллă хутлă предложенисем | 1 |
| 39 | Пăхăнуллă хутлă предложенисене вĕреннине аса илесси | 1 |
| 40 | Пăхăнуллă хутлă предложенисене тишкерелли йĕрке | 1 |
| 41 | Тĕрĕслев диктанчĕ. | 1 |
| 42 | Изложени | 1 |
| 43 | Изложени | 1 |
| 44 | Кăткăс тытăмлă хутлă предложенисем | 1 |
| 45 | Кăткăс тытăмлă çыхăну паллисĕр хутлă предложенисем | 1 |
| 46 | Кăткăс тытăмлă çыхăну паллиллĕ хутлă предложенисем | 1 |
| 47 | Кăткăс тытăмлă сыпăнуллă хутлă предложенисем | 1 |
| 48 | Кăткăс тытăмлă пăхăнуллă хутлă предложенисем | 1 |
| 49 | Сочинени | 1 |
| 50 | Чĕлхе, пуплев тата çыру | 1 |
| 51 | Текстпа ĕçлесси | 1 |
| 52 | Чăваш çырăвĕн аталанăвĕпе паянхи сăн-сăпачĕ | 1 |
| 53 | Изложени | 1 |
| 54 | Публицистика стилĕ | 1 |
| 55 | Публицистика жанрĕсем | 1 |
| 56 | Заметка | 1 |
| 57 | Репортаж | 1 |
| 58 | Очерк | 1 |
| 59 | Хаклав | 1 |
| 60 | Интервью | 1 |
| 61 | Публицистика стилĕпе текст çырасси | 1 |
| 62 | Пуплев стилĕсене вĕреннине аса илесси | 1 |
| 63 | Пĕр-пĕр темăпа очерк çырасси | 1 |
| 64 | Синтаксиса вĕреннине аса илмелли тĕрлĕ ĕçсене пурнăçласси | 1 |
| 65 | Синтаксиса вĕреннине аса илмелли тĕрлĕ ĕçсене пурнăçласси | 1 |
| | Синтаксиса вĕреннине аса илмелли тĕрлĕ ĕçсене пурнăçласси | 1 |
| 66 | Тĕрĕслев ĕçĕ | 1 |
| 67 | 5 – 9 классенче вĕреннине аса илесси. Республикăн пĕрлехи экзаменнне хатĕрленетпĕр. | 1 |
| 68 | Пĕтĕмлетӳ | 1 |